**Республикăра сăн ӳкерчĕксен «Объективра – ăслăлăх» конкурсне пĕтĕмлетнĕ. Унта И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçлекенсемпе вĕренекенсем хастар хутшăннă, малти вырăнсене йышăннă.**

Чăваш Енри паллă спортсменка, пулас журналист Олеся Игнатьева ача чухнех фото ăсталăхĕпе кăсăкланма тытăннă. Паян вăл – ăста фотограф, хăйĕн ĕçĕсен куравĕсене те йĕркелет. Конкурсра «Куçа курăнман тĕнче» номинацире çĕнтернĕ, çавăн пекех ăна «Куракансен килĕштернĕ чи лайăх ĕç» ятарлă парнепе чысланă.

Журналистика факультечĕн студенткисем Сюзанна Сташенкăпа Виктория Павлова – «Ăслăлăх - аталану» номинаци лауреачĕсем. Иккĕмĕшĕ «Фото-life» студин дипломне тивĕçнĕ. Ăслăлăхри çĕнĕлĕхсемпе паллаштаракан сăн ӳкерчĕксене калăпласа Екатерина Веденеевăпа Надежда Артамонова палăрнă.

**Е.АНДРЕЕВ. Газета «Хыпар». 2013.18 июня.**